УЙАП М.
ЙАНКАС ТУКТАШ

# СĂВĂСЕМ

Ђăваш Кĕнеки Уйрăмĕ
Шупашкар
1930

«КАНАШ» ХАÇАТ ИСТАТТĔЛСТВИ

# СУНТАЛ

ҪĂВАШ ПРОЛЕТТАРИ ПИСАТТĔЛĔСЕН АССОТСИАТСИЙĔ КĂЛАРАКАН

ҫăвашсен пĕртен пĕр илемлĕ литтераттур, криттĕк, политтĕк, искусствă тата наукă шурналĕ.

**СУНТАЛ пайанхи куи ыйтăвĕсене ҫутатса паракан калавсем, сăвă-поэмăсем, повĕҫсем, очҫĕрксем, пйессăсем пиҫетлет.**

**Ҫырма тытăнакансене пулăшса ответ парать, ҫитменлĕхĕсене кăтартать. Пултарулăхĕсене сăнас майпа литкрушоксен страниҫисем тăвать.**

Теорипе криттĕк пайĕнҫе литтераттурă ыйтăвĕсене ҫутатса парать, пиҫетленсе тухнă кĕнекесене хак парать. Кулăшсем, фотто-ўкерҫĕксем, тĕрлĕ хыпар кĕртет.

**Ҫырăнса илме ХАКĔ:**

3 уйăха — 60 пус, 6 уйăха — 1 тенкĕ те 20 пус, 1 ҫула — 2 тенкĕ те 40 пус.

Уйрăм № хакĕ 25 пус.

**Ретакси атрĕсĕ:**

*Чебоксары, Канашская, 15, ред. газ. КАНАШ.*

УЙĂП М., ЙАНКАС, ТУКТАШ

# СĂВĂСЕМ

Ретактăрĕ ВАÇАНККА

★

Ђăваш Кĕнеки Уйрăмĕ
Шупашкар — 1930

# УМСĂМАХ.

Ђăваш пролеттари писсаттĕлĕсен ассотсиатсийĕ çырма тытăннă çамрăксен пултарулăхне сăнаса пырат, ÿсме пулăшат. **Уйăп Мишши, Йанкас, Тукташ**—ЂАПП ĕретĕнђе ÿсекен поетсем. Вĕçем колхосра (Уйăп), происвотствăра (Йанкас), пиђетпе опђă ĕçĕнђе (Тукташ) ĕçленĕ вăхăтра илемлĕ литтераттурă ĕçĕнђе те хăйсен пултарулăхне ђылай кăтартрĕç. Вĕсен сăввисенђе аван йенĕсемпе, çитĕнÿсемпе пĕрле, паллах, хушăран çитменлĕхсем те (ытлашши çăмăлланса кайса уй-хире, хĕвеле—пурне те вĕçĕмсĕрех ташлатни, çĕнĕ улахра ĕçлессине пĕр «палалайккă» тытса кĕвĕ калассипех витĕнтерсе хуни, „çĕнни-кивви“ сăмаха турткаласа „çĕнни-кивви“ мĕн иккенне кăтартаймасăрах та кĕвве йухтарса кайни, ђĕлхе йенђен çителĕклĕ йакатман вырăнсем, т. ыт.) пур.

Çапах та, çак çамрăк йулташсем, хăйсем малашне те тăрăшса ĕçлесессĕн, пултарулăхне тата малалла йарассине шанса, ђăваш пролеттари писаттĕлĕсен ассотсиатсийĕ вĕсен сăввисене пĕђĕк спорнĕк туса кăларат.

Ђăваш пролеттари литтераттурине йуратакан йулташсен Уйăп М., Йанкас, Тукташ сăввисене тĕплĕн криттĕклесе, вĕсен çитменлĕхĕсемпе ырлама тивĕç йенĕсене кăтартса, вĕсене литтераттурă çулĕ çинђе малалла тĕреклĕ утăмсем йарса пусмашкăн пулăшмалла.

*Ретактăр.*

Чебоксары, типография школы ФЗУ Чувашгиза.

Чувашлит № 380. Заказ № 1092. Напеч. 3000 экз.



# УЙӐП МИШШИ

## ПРОППЕЛЛЁР.

Ех, уйхир!
Уйхир сиксех ташлаҫ.
Сӗлӗсем вӗҫеҫҫӗ шерепеллӗн....
Ӑҫтан ҙӑтас? Пӑххалӗ,
Ҙӑвашла
Хурҫӑ сассипе йурлаҫ
Проппеллӗр...

Ӑҫтан ҙӑтасха
Йурӑсӑр пайан?
Сӗлӗне вырат, ав, хурҫӑ трактӑр.
Тӗлӗнтернӗ ват аслапайа*.
Карҙӑк сӑхха йанӑ:
«Тур ҫырлахтӑр!..»

Пӑхха, пӑх,—
Ваӊук, ав, трактӑрис.

* Аслапай—аслӑ анне, асанне, мамак, мами.

Пуҫӗнђе ун—
Ҫутӑ тӳпеттейккӑ.
Трактӑр—хурҫӑ сасӑллӑ тӑрри...
Хыҫӗнђе—
Хӑлаҫланан ҫӗн шнейккӑ...

Шнейккӑна, ав,
Сӗлӗ пуҫ тайаҭ.
Шнейккӑна кӗтет вӑл, касӑласшӑн.
Ҫилӗ, тен,
Киле-киле кайаҭ
Шерепепе
Выђаса йуласшӑн...

Ех, кашлах,
Кашлах хирти тырпул,
Кашласа йуласха, тетӗн пулӗ...
Выр, муђи,
Ав, пуҫ тӑкаҭ урпу.
Вырмасан сана вађђи мӗн йулӗ?

Йулашки ҫулсем
Алри ҫурлан.
Йулашки кунсем ҫитсе ак, килђӗҫ.
Ан хурлан, муђи, ес,
Ан хурлан,
Ан хурлан, сухаллӑ Йак Ваҫҫилђђӑ.

Ђас ак, ђас
Кунсем йухса иртеҫ.
Савӑнса тыр-пулӑ шерепеллӗн

Тайкаланса ларĕ
Уйхирте,
Итлесе,
Мĕнле йурлат проппеллĕр...

Ах, пĕлеп,
Пĕлеп тăван уйхир,
Ђас ак, ес илемлĕн ђеђекленĕн.
Тăрри пек унђух
Хĕвеллĕ ир
Йуррăмпа еп
Пĕлĕте çĕкленĕп!..

Шупашкар, 4-IX-28 ç.

## ÇУЛЛАХИ КАНИККУЛТА.

Вăрман... вăрман...
Ытла та уçă,
Ытла та канлĕ кăкăра.
Мĕн пек телейлĕ манăн пуçăм
Кунти пур ырлăха кура.

Ах, пит илемлĕçке çĕршывĕ,
Илемлĕ йешĕл сĕм вăрман.
Кунта йăлтах çырла шăрши вĕт!
Кун пек тĕссем ниçта курман.

Кунта колхос...
Ах, çĕнĕ, çĕнĕ
Кунти кунсем, кунти тĕнђе...

Кунта телейлĕ кашнă çынĕ
Çунан çĕн пурнăç вутĕнђе.

Ирхи тĕтре, сĕт пек шап-шуррăн,
Вăрман çине кăшт çĕкленсен,
Кашни питрех хаваслăх курăн...
Хавас питсем ĕçлекенсен.

Тухса кайатпăр ут çулмашкăн...
Кашнин аллинђе çава.
Выља, хĕвел, ђупту ес, ашкăн,
Епĕр вăтанмăпăр çавах...

Мĕн пек телейлĕх ĕçлемешкĕн
Çак халăхпа, çак ушкăнпа.
Ђĕвĕл хаваслăха ĕммешкĕн
Ђĕремпеле... çамрăк йунпа...

Епĕр çулатпăр... Ех, хаваслăх!
Кашни вĕт ӳсĕр унпала.
Ах, сывлăш уçă... Сывлăш аслă..
Çунах, хĕвел! Ес çун йалан!

Тӳпе кăвак та тăрă, тăрă...
Куçа ĕмет кăвак инçет.
Ăçтан ђĕлхем ман ђăтса тăрĕ
Сăвăламасăр ун çинђен?

Савап сана, йешĕл Çăкалăх!
Савап сана, уйăхлă каç...
Ах, тусăм, ĕмĕр асăнмалăх
Ман сăввăмсем пайан йухаç.

◆◆

# АТĂЛ ЛАРИЂЂЕН.

Вăхăт халĕ
Çунапа шăваť.
Нăтăр-нăтăр урасен сасси.
Анђах çук, ђас
Анлă мăн шыва
Пăрлă тум çĕлесе парасси...

Атăл
Анлă кăкăрĕ çине
Çакнă шĕлтĕр-шĕлтĕр
Шŭлкеме...
Тенкисем ун кĕмĕл,
Вĕр çĕнех,
Шур аппаçăм патне пуљ
Кĕме...

Шураппаçăм
Çăнăхне аллаť,
Пĕçересшĕн тутлă куђђенеç.
Шур аппаçăм
Ђăмăртаť алла...
Хăйпе выљама
Ђĕнет...

Ђăрăшсем
Ех, тăхăннă хушпу.
Ђăрăшсем—ђăн-ђăн туйарăмех.
Шăрçисем те
Йарăм-йарăмех...

Калăрсам,
Кам сирĕн упăшку?..

Ђăрăш,
Пуçна кўрха,
Кўрха, теп,
Ђуптăвам...
Ман кăмăла çĕнет...
Çимĕк каç хăмланă
Ťыха пек
Çил ђупаť те, хыттăн кĕçенет...

Хаљ анђахçке
Вĕçе-вĕçĕнех
Шăвăнатђĕç мĕн ђулĕ кимĕ
Пайан Аţăл
Кăкăрĕ çине
Çакнă шĕлтĕр-шĕлтĕр
Шўлкеме.

Шупашкар, 25-XII—28 ç.

## УТĂ ÇИНЂЕ.

Хĕвелтухăç ылттăн, ылттăн...
Пĕлĕтсен хĕррийĕ пурçăн.
Ех, кĕрлерĕ улăх хыттăн,—
Улăхра кĕрлерĕ хурçă.

Сывлăм—кĕмĕл, сывлăм çутă,
Сывлăм—çут мерђен тумламĕ...

Йара пар! Хĕлле ĕнӳ те
Хăрăк улăма ҫăмламĕ

Ех, ҫулатпăр! Ех, ҫулатпăр!
Ҫуласси мĕн пур таккулăх?
Калаҫатпăр та, кулатпăр,
Калаҫу та ҫĕвĕл кулă...

Калаҫу та ҫĕвĕл кулă
Йанăратҫке пур ҫĕрте те...
Йанăратҫке симĕс улăх.
Ҫут хĕвелĕ пĕҫертетĕ.

Хăшин ҫави лупаткашăн,
Лупаткашăн ҫави хăшин.
Кăшшин-кашшин, кăшшин-кашшин
Кăшшин-кашшин, кăшшин-кашшин...

Йе кашнийĕ кĕреплеллĕ,
Тавăраҫҫĕ кăтăр-кăтăр.
Тӳперен, ес, хĕрт хĕвелĕ,
Пирĕн утă типсе тăтăр...

Пирĕн утă типсе тăтăр,
Тӳперен, ес хĕрт, хĕвелĕ...
— Сенĕк тытăр! Йăтăр-йăтăр,
Купана йăтса тӳпелĕр...

Утă пухрĕҫ, пухса хуҫĕҫ,
Купашерĕн, купашерĕн
Пăх, лараҫҫĕ, ҫуккă шуҫĕ—
Те алшерĕн, те ҫĕршерĕн...

Купаланнă улăх тăрăх,
Улăх тăрăх купаланнă...
Тӳпе кăнкăвак, тăп-тăрă,
Тайăнаť хĕвелĕ аннăн...

Улăхрах вĕт кун каçатăн...
Ĕçлесен те ывăнмаллăх
Çук, кĕтместĕн ес каça та,
Çук, кĕтместĕн, çук кахаллăх...

Çук, кахаллăх! Çук кахаллăх!..
Анăç пурçăн ҫатăр карҫĕ—
Ĕçҫен халăх,—ĕçлĕ халăх
Утине çулса пуçтарҫĕ...

1929 ç.

## ВЫРМАРА.

(Ирĕк сăвă).

Ех, уйхир!
Тыр пул ташлаť
Ҫăвашла...
Пуҫахсем пуçа тăкаççĕ
Хум çинҫе...
Хумĕсем!
Хумĕсем инçе кайаççĕ
Пит инçе...

Анатран кусса килеççĕ,
Ех, ҫупаççĕ!
Тем çĕтернĕ,
Тем шыраççĕ,

Кам пӗлет?..
Пуҫахсем!
Ҫӗрелле пӑхса илеҫҫӗ,
Тем тупаҫҫӗ,
Хумӗсем каллех пыраҫҫӗ
Йӑванса...

Ай, тӑрри!
Тӑр, тӑр, тӑр!..
Туса илет...
Ун йурриӗ,
Ун сассиӗ
Уйхир тӑрӑх
Хумсен шавӗпе пӗрле
Хутшӑнса,
Хутшӑнса вӑл йан кайаӑ...

Кайтӑри!
Кӗтнӗ вӑхӑт ак килет:
Хаҫ анҫах...
Сухапуҫӗ
Каппайаӑ.

Ак тыр пусӑ
Шерепеллӗн
Вӗҫсе ларнӑ ҫухне
Ун сассипеле
Проппеллӗр
Ех, аҫашлӗҫ йурласа
Ылттӑн тырӑ пуҫахне...

Ах, хěвел!
Шăрăх йун!
Ес выратăн,
Ес выратăн!
Нуккă, çивěђ çурлуна
Тата çивěђђěн кастар!
Çамкаран йухаť
Тар...
Çилě, килтěрђђě,
Уна
Астар!..

◆◆

***

Кунсем пайан—хуг-кěнеке
Куллен урок.
Йађђейккă
Сăвă...
Телейлě вăл вěренекен,
Хăť пурнăçě пулсан та
Йăвăр...

Иртеç кунсем.
Иртет ерне.
Вěт ђарас çук тытса
Пěр нимěн...
Ех, пуçăм,
Çамрăк ěмěрне
Тухса курасха,
Терěни мěн?..

Çампа хастарлăх сĕтекне
Пурнăç кăкрийĕнђен
Ĕметни?..
Çамрăк кунсенĕн ђеђекне
Çĕршывăма парасха,
Тетни?..

Камах пулман пуљ
Çамрăк çын?
Çамрăк пулма
Кашнин пĕр тивĕç...
Ех, шкул, ес—
Тимĕрĕç лаççи.
Унта ăса
Хăйраççĕ çивĕђ...

Çунатçке, çамрăклăх унта.
Питсем
Çырла пек пиççе çитнĕ...
Кам çамрăк—çун!
Вут ђĕрт,
Çунтар!
Кам хаљ ађа—
Телейлĕ çитĕнĕр!..

Шупашкар, 24-XII—28 ç.

◆◆

## ХИР КĔВВИ.

Çут хĕвелĕ кулнă майĕ
Пит те ăшă, шăрăх.

Йухтарамха йуррăма еп
Хир-вăрмансем тăрăх.

Ăшă çил вĕрет вăш та вăш,
Вутланаť вăй-халăм!
Ак, куç умĕнђе Мăштавăш—
Еп çуралнă йалăм.

Ак, тăван уй хирĕ ылттăн,
Ылттăнăн йухатĕ...
Хаљ тухсассăн пиллĕк-улттăн
Хаљ вырма та хатĕр.

Ех, çунаť тем пĕçересшĕн
Тўпери вуђахĕ.
Ăна пĕрђĕпе пересшĕн
Ылттăн тыр пуђахĕ.

Йун хĕрўллĕн хумханаťи,
Пурте хаваспа вăл.
Тыр вырасшăн куљђанаťи
Ĕçре пиçнĕ Павăл?

Путĕр-путĕр путени,
Ан куљђанђђĕ хыттăн.
Хресђен пурлăхĕ тени
Ав, йухаť вăл ылттăн..

Ей, кашла, уй-хир, кашла,
Санăн хуйхăраси?
Çил арманĕ, хăлаçлан,
Сан ахаљ лараси?..

Шурă пĕлĕт—услам çу.
Шурă пĕлĕт—мамăк.
Ни çăтмахĕ унта çук,
Ни хăрушă тамăк.

Пĕлĕтсем, ей вĕçĕр, вĕçĕр,
Каç сире йуратĕ!
Ман анкартинҫе кĕçĕр
Хурçă тус çывратĕ.

Ыран ир вăл ĕçлеме
Ылттăн уйа тухĕ.
Хумĕ ĕмĕр вĕçлеме
Йулашки хут йухĕ...

Хурçă сасă уй-хирпе
Пĕр ҫĕтренсе кайĕ.
Ăна сывлăмлă ирпе
Хăмăл пуçне тайĕ...

Ай турах-тăр! Пăх ара,
Шавласа хăпарҫĕ...
Тесе, шăппăн хăлхаран
Пăшăлтатĕ карҫăк...

Карҫăксемшĕн итлеме,
Тĕлĕнмеллĕх пур çав.
— Кинемей, теп, кинемей,
Пăх, лаша та хурçă, ав...

Сире йут вĕт хурçă-тимĕр,
Тус вăл çĕнĕ çыншăн.

Çак пире çуратнă ĕмĕр
Трактăрпа машшиншăн.

Хаљ пулсассăн çĕр ана,
Хаљ пулсассăн саплăк,
Трактăр ватĕ йăрана,
Пулмăпăр асаплăн!

Ăшă çил вĕрет вăш та вăш...
Вутланаĭ вăй-халăм!
Ак, куç умĕнђе Мăштавăш—
Еп çуралнă йалăм!..

Шупашкар, 29 ç.

## Ĕ Ç Р Е.

Хаљ анђахђĕ, ирхине
Питĕ шăпђĕ,
Шăрататђђĕ йуррине
Савнă шăпђăк.

Шăрататђђĕ савăнса
Çулçă айĕн;
Хур(ă)н итлеђђĕ авăнса
Çиле майĕн.

„Ах, тăхтас-ши, йе халех
Пĕр тухас-ши?"
Тет хĕвелĕ, ахалех,
Хăй пăхасшăн..

Кулђĕ, кулђĕ... Ей, кулаť—
Ђун уççийĕ—
Тăрă сывлăм çутăлаť
Çулçă çийĕн.

Кăвак пĕлĕт тӳпере
Тăрă, тăрă.
Ех, еп çӳрĕттĕм пĕрре
Пĕлĕт тăрăх...

Еп ыталăттăм ун ђух
Хĕвеле те.
Савăнса çакна ман ђун
Кĕвĕлетĕ.

Пуртăсен сассипеле
Ђăнкки-ђанкки!
Йанăрарĕ ирпеле
Пĕр теђанккă.

Каш! кашлаççĕ йăвăçсем,
Теме туйнă.
Кайăксем çӳреç вĕçсе,
Пурте хуйнă.

Ђĕвĕл-ђĕвĕл сассисем
Йăлт лăпланђĕç.
Çӳллĕ йăвăç тăррисем
Хаљ пĕр танђђĕ.

Ав, выртаççĕ йăванса
Урлă-пирлĕ.

Вĕт касма вăл пит ансат,
Вăй çеç кирлĕ...

Йăвăçсем кайса ӳксе
Йăванаççĕ;
Ăна курса мушиксем
Савăнаççĕ.

Савăнаççĕ... Ахаљи?
Пĕлĕр ыррăн.
Вĕт кунта колхос ваљљи
Панă вырăн.

Пĕрлешсе ĕçлесшĕн халь
Ĕçлĕ халăх:
— Пулĕ, терĕç, çĕнĕ йал—
Çĕн «Çăкалăх».

Ђĕтрев саслă тимĕр ут
Ђупса килĕ.
Алĕçне те пĕрех хут
Туртса илĕ...

Кунта йешĕрĕ уй-хир
Çĕн сăн-питлĕн.
Машшинсен сассине ир
Тухса итлĕн.

Ей, йанра ун ђух сиксе,
Çĕнĕ çемĕ!..
..Пысăк ĕмĕт мушиксен,
Пысăк ĕмĕт.

Ав, вĕрет ĕç. Ĕç вĕрет.
Ĕç хĕрӳллĕ.

Пĕр пĕҫĕк Микихвĕрех
Ĕçре çӳллĕ.

Ав, Йакку пиҫҫе тăрат̆,
Тем шут кĕнĕ:
Кăшт канмашкăн йăхăрат̆,
Те ӳркеннĕ?

Ӳркенмен вăл, ырнă çеç.
Ăçтан ырмасăр?

Ăçтан ĕçлен йăвăр ĕçе
Пĕр канмасăр?

Вăл, хăй кивĕ сăкманне
Илсе уртрĕ,
Шакла пуçлă Раманне
Кăҫăк туртрĕ.

Пырса тăҫĕ ун умне:
Ав, кăларҫĕ
Хăйĕн пăхăр ҫĕлĕмне,
Шаклаттарҫĕ.

Хура пиҫĕ кулкалат̆.
Тар—шăрçа пек,
Шăлса илҫĕ сухала
«Вашнăй» çын пек.

—Ну, туртатпăри, шакла?
Ей, туртатри?..

. . . . . . . . . . . . . .

. . . . . . . . . . . . . .

Ăшă çилĕ, кушакла
Мăштăртатрĕ.

Шупашкар, 7—V—29 ç.



# ЙАНКАС

## ÇЫРУ КОЛХОСА.

Хапрăк-савăт шкулĕнҁен.

Йалпа хула
Мана хаҁ—çывăх тус.
Хулан ҁĕрçи çине
Еп пусрăм пусăм.
Йалпа хулан тумнех
Ман çамрăк пуç
Хакласшăн çак хисеп,
Йуратнă тусăм.

Çампах сана çыратăп еп
Çыру,—
Йеплеха йал-йышсем
Йалта пурнаççĕ?
Колхос авани хаҁ ĕçлет,
Маруç,
Тата хăçан уçаттăр есĕр
Йаçлĕ?

Кунта еп хаԗ пурнатăп
Пит аван.
Хĕрӳ ĕçрех
Çиçсе иртет ман вăхăт.
Куллен еп пĕрԗĕлеп
Хура тăхлан
Хаçат-шурнал ваԗԗи—
Калав йе сăвă...

Кунта хула хаԗ—
Вутлă хĕм вуԗах:
«Тан танн!..» сасса
«Ту-ту-ут!..» сассем çĕнтернĕ.
Çĕрле урамĕсем
Ун çап-çутах,
Уйар каçхи тӳпен
Çитти манерлĕ.

Кунтах кăçал
Хулан урамĕсем
Çĕн çуртсемпе
Каркаланмаваскарĕç:
Унта-кунта
Хĕп-хĕрлĕ ԗул çуртсем
Тӳпепелех
Сăмах тытса вакларĕç...

Пĕр сăмахпа калас пулсан,
Маруç,—
Çак çĕн тĕнԗе
Пирте ӳсет хисеплĕн.

Йалпа хула тытаҫ пӗрле
Пӗр ҫул,
Ҫав ҫулпала
Утас пулаҫ кӗрнеклӗн.

Йалта та пурнӑҫ
Хаљ шӑваҫ аван,
Ӑна еп
Сан ҫырусӑрах куратӑп.
Пуш сехетре
Йури еп хуларан
Ҫӗн хир тумне курма
Тухса утатӑп.

Пӗр-пӗр колхос уйне
Тухса тӑрсан,
Ман куҫӑмсем
Илем ӑшнех путаҫҫӗ.
Пӑри,
Урпа,
Ыраш... хампала тан
Йӑваш ҫилпе
Пӑлханайса лараҫҫӗ...

Ҫӗртме ҫинђе
Колхос лаши—
Леш, трактӑр—
Пӗр самантрах
Ҫӗтсе тӑкаҫ хире...
Ђӑнах,
Маруҫ,

Ҫён пурнăҫ вёт тăватпăр,
Ана ес хăв куран
Куллен ĕҫрех.

Йулашкинҕен
Сана ҫакна калам:
Ес колхосра,
Еп савăтра ĕҫлетĕп...
Ҕĕрӳ вăрҫмасӑ пулсан...
Еп санпала
Ҫĕн пурнăҫа
Ҫĕн пил сунма тивлетлĕ.

Ҫыру ҫырса пĕлтер,
Васкав кĕтетĕп.

Шупашкар, 28 ҫ.

## ҪУРХИ КУНРА.

Кĕрен хăва кăҕкисемпе
Йаштак тумне шупкан тĕрлерĕ.
Ҫĕр-пин хĕлхем йĕпписемпе
Ҕӳреҕене хĕвел йĕплерĕ.

— Ҫурхи хĕвел, пӳрте кĕрех
Ман патăма ҕӳреҕерен.
Тар-шăрш пӳрен ҫĕре пĕрех
Хĕл кĕрĕкне хывса перем...

Хĕвел ҕăнах мана итлерĕ:
— Пушахи сан ҫĕн кĕреке?

Кĕрсе ларам, апла-тăк... терĕ.
Ђасрах еп хыврăм кĕрĕке.

Манпа хĕвел хĕрсех пуплет,
Халапĕсем питрех мухтанђăк:
— Çĕн хир тумне сиплеп, сиплеп,
Манран пурахха,—тет вăл,—шанђăк.

Халап çине сăмах купи
Хыçран хыçах сиксе утланђĕ.
Йăл-йăлл! кулаŤ хĕвел тути:
— Айта, тула тухарха, анђăк.

Хĕвел ђĕнет мана тула.
Тухамха, терĕм,—ну, айта...
Ай-пай! манран каçсах кулаŤ
Тула тухсан йĕпе автан.

Лађакара хăй пылђăкланнă,
Шарт-шарт! çапаŤ çунаттине:
Хĕл ыйхăпе Неçук пут-лан-нă!..
Ки-ки-ре-кук!—ђăсаŤ мăйне.

Автан çине ђĕрем çилленђĕ,
Ђутах ђикеттĕм сенĕкпе..
Анђах, пахђа ăшра кӳлленђĕ,
Çил-шăрт тĕлнех, ђеђенлĕхпе.

Ман çиллĕхе хĕвел вăрларĕ,
Куçа караŤ вăл пин илем..,
Вăлах питрен çемçен лăпкарĕ,
Ђĕнсе илсе çурхи çиле.

Хĕвел лăпкаҫ, лăпкаҫ мана,
Йăваш саспа халап пуҫларĕ:
— Ман шухăшпа, ку пахҫана
Нумайтарах акас, тет—ҫарăк.

Тымар апатпала ĕне
Витрен-витрен сĕтне сутарĕ...
Ҫапла хĕвел мана сĕнет:
Аках кунта, тет—кишĕр-ҫарăк.

— Санпа, хĕвелĕм, еп—сукласнă,
Айтаха халҫ утар хире.
Кăҫал епĕр вун пусă каснă,
Виҫ пусăна ватса, хире.

Каллех йăл-йăлл! кулаҫ хĕвел.
Нӳрек хире тухса сĕнкетпĕр...
Ай-пай! тӳпе ҫурхи кĕвве
Ман ҫĕреме ҫыхаҫ тирпейсĕр!

— Три-прилҫҫ! трилҫ-прилҫ! Тухаттăр ир!
Тăррисемпе тӳпе ҫĕтрет.
— Апла халҫ сирĕн ҫĕнĕ хир...
Тесе хĕвел шăлне йĕрет.

Хĕвелĕн шăлĕ—кĕмĕл, ылттăн,
Вут хĕмленет ик куҫĕнҫен.
— Аван!—тет вăл, хĕмленҫĕ хыттăн,—
Кунран тивлет тупаҫ ĕҫҫен.

— Ҫапла, ара, акасха, тетĕп—
Кăҫал хире нумай тĕссем...

Хӗвелпеле хӗрсех пуплетӗп:
— Советӑнха вӑрлӑхӗсем...

Хӗвел йӗрет шӑлне, пуплет;
Халапӗсем ҫаплах мухтанҫӑк:
— Ҫӗн хир тумне сиплеп, сиплеп,
Манран пурахха, тет вӑл—шанҫӑк!

Халап ҫине сӑмах купи
Тек те текех siксе утланҫӗ...
Йулашкинҫен, хӗвел тути:
— Ҫитет, тесе, ҫатах хупланҫӗ.

Шупашкар, 28 ҫ.

# УЛӐХ ЙУРРИ.

Йешӗл улӑх тем сарлакӗш!
Ҫалтӑрарӗҫ куҫӑмсем:
Кӗмӗл шыв...
Хӑва...
Хур-акӗш...
Сарӑ, хӗрлӗ ҫеҫексем..

Ой, илемлӗ йешӗл улӑх,
Илемпе ҫиҫет ҫӗрем.
Ҫавал шывӗ тӑрӑ,
Тулӑх,
Ҫыранне витет ҫерем.

Хӑлтти-кӑлтти! шыв арманӗ
Сахал мар ҫав

Çавалра*.
Ак Çĕнкас колхос арманĕ
Хăлтлатать,
Ĕçлет умра.

Каш та каш! кашлать çĕр саслăн
Шурă кăпăклă вершник.
Ђантлатать кĕлет хаваслăн—
Ђул тăхать унта
Мелник.

Кунпах пĕтмĕ Çавал ĕçĕ,
Хĕрӳ ĕç ыйтать
Хăват...
Çулсем хăвăрт иртĕç,
Вĕçĕç,—
Хисепленĕ çав хăват.

Кашнă çирĕп пуснă утăм—
Пусăмланмĕ кайалла.
Пĕрлешсе ĕçре,
Пĕр шутлăн
Хаљ васкарха
Малаллах!

* * *

Ой, илемлĕ йешĕл улăх,
Илемпе çиçет ђĕрем.
Çавал шывĕ тăрă,
Тулăх.
Çыранне витет çерем.

---

* Çавал—йухан шыв йађĕ.

Нимӗнле киҫем салхуллӑх
Кунта татмӗ кӑмӑла.
Ҫыранран ак
Хӑмӑр тулӑ
Сӗткенленӗ хӑмӑла...

Ҫыранрах
Кӗрен хӑваллӑх
Кӑтрине шыврах ҫӳкег. .
Ой! аннемҫӗм —
Мӑн Ҫавалӑм,
Ҫӑпӑлла мана ес тек!

Кӗпене хывса ҫакатӑн
Йаштак хулӑ хӑваран,
Пулӑ пек шыва ҫӑматӑн
Тарӑн,
Сивӗ авӑра...

Ҫӳхенсе
Шывран тухатни,
Вырӑнта сан кӗпӳ ҫук...
«Куҫӑнах манран кулатни,
Манпала ҫӳкенес ҫух?!»

Ес «ӑна» ҫасах тупаймӑн...
«Хи-хи-хи!..»
Кулаť хӑва.
Хӑвана вӑрҫса кӑклаймӑн,
Тепӗр хут сикен шыва...

. . . . . . . . . . . .

— Есĕимха, савнă тусăм,
Пытарса ман кĕпене?
Алхаснин сахал çав усă,
Савнă тусăм,
Ку ђухне...

Савнă тусăн хăмăр куçĕ
Йăл-йăлл! пăхрĕ ман çине:
—«Унранах, тен,
Пысăк усă?!»
Тесе, йĕрђĕ тутине.

Пĕр манерлĕ шухăш ђупрĕ
Манăн
Улăх хĕрĕпе.

. . . . . . . . . . . . . .

Çыранри хăва ал çупрĕ—
Шĕпĕр-шепĕр!
Йерипе...

Пит хаваслăн
Манпа çумлă
Ихиклерĕ тус кулли...
Нӳрĕ улăх—
Симĕс тумлă,
Кĕмĕшке—
Ђеђек кӳлли.

* * *

Ой! ђĕрем,
Ес ма вĕретĕн,—
Кăкăра çĕклен,

Тапан?
Йе çитес куна кĕтетĕн?
Йе хăв тусупа
Супан?

Ђĕрем сиктĕр,
Йун вĕретĕр!
Мĕншĕн хаљ ăна
Ђарар.
Çак тĕнђешĕн ўснĕ
Епĕр,
Уншăнах
Вăйа хурар!

Ђĕрем савнă
Тусăм, халĕ
Пĕр çулпах утар
Мала.
Çак хисеп
Хăй кам та калĕ,—
Ђăн, çĕнелђĕ
Самана!

Кашнă çирĕп
Пуснă утăм
Пусăмланмĕ кайалла.
Пĕрлешсе ĕçре,
Пĕр шутлăн
Хаљ васкарха
Малаллах!

Шупашкар, 28 ç.

## ÇĔРТМЕРЕ.

(Йурă).

Ех, аванçке
Шăрăхра,
Кайăк-пуçлĕ шурлăхра
Сарă ђăмăр ђўлмекрен
Сĕт ĕçмешкĕн
Çĕртмере.

Тўпере
Йурлаť тăри
Шурлăхпах йухаť йурри.

Ну, вăрт-варт утсам,
Кĕсрем,
Çивĕђ пул йалан
Ĕçре.

Мăкăђ питлĕ тус—
Машук
Тетĕр:
«Çивĕђ сан лашу».
Ав пыраť вăл
Çырмапа,
Йăтнă хăй ирхи апат.

Манпа савнă тус
Машук
Ĕнер.
Тытрĕ калаçу—
«Кăмсамул пуласђĕ, теп,

Вĕрентсем
Мана кăшт, тет.

Кĕç ак
Манăн Машукран
Пулĕ-тăрĕ «кăмсамул».
Килес çул
Ку шурлăхра
Йал тăвасшăнха комун...

Йешĕл шурлăх
Мĕнешкел!
Кăпăш çĕрĕ кĕмĕшке...
Ут, кĕсремĕм,
Çăмăлрах,
Плукăм пытăр йакарах.

Ех, аванçке
Шăрăхра,
Кайăк-пуçлĕ шурлăхра
Сарă ђăмăр ђӳлмекрен
Сĕт ĕçмешкĕн
Çĕртмере.

Упи, 28 ç.

## УЛАХ ХĔРĔ.

Çиййĕнђе акă унăн халат,
Пуçĕнђе—катан-пир хĕрлĕ тутăр.
Умĕнђе—йĕтĕн-сӳс кăнђала,
Васкасах хутăрат хăй вăл хутăр...

Йаштака кĕлетки унăн çӳлĕ;
Пиђĕ—пиçнĕ анис панулми.
Хăмăр-куçĕ—таса тĕпсĕр кӳлĕ;
Кĕмĕл саслă йантрав ун—кулли.

Йăпăр-йăпăр пит çивђĕ утти
Кунĕпех хăт утах,—ывăнусăр.
Пуплешет ывăнмасăр тути,
Пуплевви те пађах ун салхусăр.

Ука-хĕлĕх манер, сарă çӳçĕ
Хăлхи çийĕн сарăт йарăмне...
Ах, йеплеха ђĕрем манăн тӳсĕ
Лараймасăр ун йевĕр çумне?..

Ĕнер каç вăл мана пурçăн йенђĕк
Ђиксе йанă савса кĕсйене...
Уншăнах манăн сас хĕлĕхленђĕ
Йанкăс çеммĕн пайан кĕввĕме.

Пурçăн йенђĕк арки—капăр тĕрĕ,
Тĕрĕсем—«КИМ» паллиллĕ ука...
Ах, савап еп сана, улах хĕрĕ,
Йуррăм саншăн пайан ман йухат...

— ——

Çийĕнђе акă унăн халат;
Пуçĕнђе—катан-пир хĕрлĕ тутăр.
Умĕнђе—йĕтĕн-сӳс кăнђала,
Васкасах хутăрат хăй вăл хутăр...

Шупашкар, 29 ç.

# АППА ЙУРРИ.

Сахал мар еп
хĕнхур тӳсрĕм
иртнĕ кивĕ çулсенђе.
Пĕђĕкрен
ним тĕлсĕр ӳсрĕм
пĕр тĕпел-кукрийĕнђех.

Аттепе аннемçĕм сутрĕç
çĕр тенке мана
йута.
Ерехне туйра вĕт кӳпрĕç,—
хăсăк çитĕ
çĕр йăтта!

Упăшкам таçта кӳпеђђи
ним пĕлми
сăра-ерех,—
пустуйах мана хĕнеђђĕ
„суђка"сем мĕн тесе... ех!

Пуçтаратăн
ђашăк-тирĕк,
йе апат-мĕн пĕçерен...
Арçынрахђĕ
манăн „ирĕк",
хирĕçен-тĕк,—ĕнсерен.

Кăлкан йевĕр сарă çӳçĕм
упăшкамшăн çеçђĕ ман...

Савăнман ман
мĕскĕн пуçăм
кивĕ пурнăçра нихçан.

Пĕрре епĕ
ђăтаймасăр
пултăм
хам хама хуçа:
„каскăн“ йагшăн вăтанмасăр
тарса
кĕтĕм тарăça...

Тарăçра та
канлĕх çукђĕ,
ĕç ăшнех путаттăм еп.
Ĕç укçи кунне
виç пусђĕ...
Мăшкăл--
кив тĕнђен хисеп!

Ой!
мĕнђухлĕ хĕнхур тӳсрĕм
епĕ кивĕ çулсенђе.
Пĕђĕкрен
ним тĕлсĕр ӳсрĕм
пĕр тĕпел-кукрийĕнђех.

---

Çĕнĕ пурнăç
танлăх пађĕ,
упăшкам,
хăт еп—çавах.

Сĕм тĕпел-кукри çуталҫĕ,
клупалла
çул йап-йаках...

Упăшкам
хăшҫух ĕçети,
ҫăмăртаҭи ҫышкине,—
Совета ҫасрах вĕçетĕн
шĕветме ун çиллине.

Арçынпа еп
ҫăн танлашрăм,
пухура та
ал çĕклеп.
Советри ĕçпе паллашрăм,
Советра та хаҍ ĕçлеп...

Çĕнĕ йал
хаҍ  уçнă йаçлĕ,
аҫапҫа ÿсет унта...
Ҫирĕк хупрĕç,
шкул уçаççĕ,
ултав тĕн сÿнет унпа!

Уй-хиртех
çÿрет хаҍ трактăр,
пĕр самант хире çĕтет...
Вун пусу питне
сăрлатпăр
тĕрлĕ-мĕрлĕ
çимĕçпе.

Тин тăватпăр
çĕнĕ пурнăç
арçынпа хĕрарăм тан.
Коллектив,
комунă урлă
хăтăлатпăр
нушаран.

Шупашкар, 28 ç.

◆◆

* * *

Ахаљши хаљ
Еп хыттăн
Хурçă сасă
Тăсасшăн
Çĕнĕ хирĕн ђĕрçинђе?

——

Тăван уй-хир!
Йăмраллă йешĕл кассăм,
Сĕнкех
Çавалăн
Çăкăр сăртĕнђен...

Санра
Еп тек курмастăп
Пăнтăх-тунсăх—
Хăвна
Ĕçђен куллен çĕнетнĕрен.
Санрах
Çĕн касăн хаљ
Комунă та

Вун пусă,
Санрах
Вут-пăс вăйсем—
Хĕрӳ ĕçре...

Çампа,
Итле,
Вăрман,
Çавалăн шывĕ
Ĕçҫен
Выртармĕ хаксăр тек сире.
Кĕçех
Çĕн кас сиртен
Пехиллĕх хывĕ—
Ун ҫух
Çавал
Çăтмахлĕ уй-хирех....

Çампах
Тăсас килет ман
Хурçă сасă
Сĕткенлĕ
Çĕнĕ хирĕн умĕнҫе.

Кĕçех ак
Хурçăпах,
Йĕм-йешĕл кассăм,
Сĕрешĕн ес
Çавалăн
Çăкăр сăртĕнҫен.

Упи, 28 ç.

# ÇУЛПУÇНЕ.

Хама çыруллăх ĕçĕнҫе пулăшнă „Сунтал“ шурнала.

Çиçĕм хĕмлĕ çамрăк халăм,
Çиçрĕн, çиçрĕн, ĕмĕр çиç!
Шав йăсла, тăван „Сунтал“ăм,—
Кĕвĕлентĕр ҫыслă ĕç.

Ҫыслă ĕçшĕн пиллĕ сăвă
Халĕ маншăн—ҫи пахи.
Хапрăк-савăт вĕрнĕ тăвăл—
Ирĕк çулшăн ҫи хакли.

Ултă пайлă çĕр пĕр пайĕн—
Ĕçлĕ халăх пиллĕхин—
Çĕн пурнăçăн тийĕн* лавĕн
Çирĕп пултăр тилхепи!

Хурçă савăт, ылттăн тырă,
Пулăрсамăр пĕр хаках:
Пур ĕç çарĕ тупгăр ырлăх,
Тупгăр ырлăх пĕр танах.

Çиçĕм хĕмлĕ çамрăк халăм.
Çиçрĕн, çиçрĕн, ĕмĕр çиç!
Шав йăсла, тăван „Сунтал“ăм,—
Кĕвĕлентĕр ҫыслă ĕç.

Шупашкар, 28 ç.

---

* Тийĕн—тулли, тулăх.

◆◆◆◆



# ТУКТАШ

## ХУРÇĂ ТĔНЂЕ.

Ку тĕнђе
Ђăнахах тĕлĕк мар,
Ку тĕнђе—
Вăрман шавĕ пек шухă.
Сивĕнмесĕр çиçет шĕл кăвар,
Хĕрӳ ĕç çинђе çеç пирĕн шухăш.

Ей, йулташ!
Тĕнђе никĕс хума
Хăвăртрах ђавсуна есĕ тавăр.
Хурçă никĕс те,
Хурçă хăма—
Çакăнта пулĕ ђаплă мухтавăр.

Каллех, тен, тыттарĕç
Винттовккă, йалав;
Каллех, тен, пытарĕç
Хускалнă йала.

Ей, тухăр пĕр харăс,
Пуçтарăнăр кар-р-р,
Аманнă çăханăн
Пуçне салатар!

---

Асаплă çул...
Çиҕ-сакăр çухрăм...
Кун-çул вĕçне хăçан еп тупăп?
Ех, йунăм, йун!
Хуралтăн,
Йухрăн,
Çапах йĕретçке
Хăрушă тупă.

Ан ăмсанăр,
Ан хапсăнăр халĕ
Йунпала çуса илнĕ çĕре.
Аслати çиçсе илĕ те,
Хускалĕ,

Кĕлпеле танаштарĕ сире!
Илтместĕрим есĕр?,
Çил майĕн
Йанăрарĕ хăрушă çикнал:
Ей, килĕр кунта, нумайăн,
Çурлапа мăлатук тытнă ал!

---

Ех, кăвак сухал,
Мĕншĕн тĕлĕнетĕн?
Йе ватă суха
Кунне хĕрхенетĕн?

Ан тив,
Суху çухалтăр,
Ан тив, йĕтĕр мăйан;
Ертел пулса йусан та
Хурçă лаша туйан.

Çуким пайан та шанђăк
Вăйхал кĕрен йалта?
Ђиркӳ пупран пушанђ-тăк—
Çакăр кĕрен йалав!

———

Хура вăй мĕлки
Хайаррăн кулаť,
Те ташлаť пайан вăл,
Те йĕрет?
Çилхеллĕ пуп, асамçă,
Кулак
Вĕсем пурте кĕтеç „дэ-юре*“.

. . . . . . . . . . . . .

Каллех, тен, тыттарĕç
Винттовккă,
Йалав,
Каллех, тен, вут хыптарĕç
Хускалнă йала;
Ей, тухăр пĕр харăс,
Пуçтарăнар кар-р-р,
Аманнă çăханăн
Пуçне салатар!

* Де-юре—саккунлăх, права.

# ЁÇ. УЙАВĔ.

(„Как родная меня мать“ кĕввипе).

Ех, мĕскершĕн пуç усса
Хаљ ларасха?
Пурте тухăр урама
Пĕр хаваспа!

Пурте тухăр тумланса,
Тухăр капăр:
Пайан майăн уйавне
Уйавлатпăр.

Пайан пурте савăнар
Ђаплă куншăн:
Савăнăç ун пупшăн мар,—
Мĕлийуншăн.

Кирлĕ мар пире мăнкун—
Тĕн пăйавĕ,
Пирĕн хамăрăн мăнкун—
Май уйавĕ.

Аслă праçнăк—Хĕрлĕ Май
Ђăн мухтавăн
Çитрĕ, ес те, кукамай,
Тухса савăн!

Çĕнтереймĕ мул—хуçа,
Ĕмĕт çитмĕ;
Ĕçпе пиçнĕ пурнăçа
Кирĕк витмĕ.

Тырă-пулă хулапа
Мăшăрланнă;
Кун ан парăр кулака—
Пăкки шантăр!

Кĕтнĕ ырă самана
Пурнăçрах тăр—
Улăштарĕ сухана
Хурăç трактăр.

Тырă пулĕ уй-хирте
Ĕнĕçӳллĕн;
Пурнăç йухĕ пурин те
Пĕрлешӳллĕн.

Çавăнпа та пуç усса
Ма ларатăр?
Пурте тухăр урама
Пĕр хавассăн.

Пурте тухăр тумланса,
Тухăр капăр,
Пайан Майăн уйавне
Уйавлатпăр.

## ОТПУÇНĔКЕ.

Çăмăрпа киҫемленнĕ çанталăк
Пуçне тайрĕ йăвашшăн çиле...
Йалтан ес уйăрлни ик çулталăк,
Ыранах тухса кайăн киле.

Кил çинҫен шутламан каçăн-ирĕн,
Ҫĕрӳне хуйхăпа лăпкаман.

Пайан ма йурлас мар, тусăм, пирĕн,
Пайан ес—çĕнĕ паттăр, утаман!

Йулашки... йулашки ыталатăн
Хăвăн çывăх тусна-пăшала;
Ыранах çарпала уйăрлатăн,
Уйăрлатăн та кайатăн йала.

Ыранах сана ак хирĕç тухĕ
Икĕ çул тунсăхланă уй-хир;
Ирĕклĕх йурри ун пыл пек йухĕ,
Халаланĕ санах ыран ир...

Пур пĕрех ан ĕнен: кĕр илемĕ
Нумайах та пусармĕ ђуна.
Авă пăх—хĕвеланăç тĕлленĕ
Хăрушă тăвăл пĕлĕт—сан çине.

Тăвăлпа тусланаť Хĕвеланăç,
Хĕвелтухĕç те хĕрелнĕ йунпа...
Тусăмçăм, çаксене ан ту манăç,
Ан хăра, хытарах ху ђунна.

Пайан хађ хумханмасť кăтра хурăн,
Ун ђух вăл та тапратĕ йĕрме.
Тăвăлпах ишĕлейĕ хĕн-хурăн
Йунпа шўнĕ тымарĕ—тĕрме.

Ун ђух та есĕ пул йалан хатĕр,
Хађ васках, васкасах кай йала.
Тĕнђипех хыпса илĕ Октапĕр,
Вара тыт пăшална кайаллах!

## ÇУРХИ ШУХĂШСЕМ.

Вăшăлтатрĕ, вăшлатрĕ
Çурхи ăшă çил;—
Пуçа шухăш хускатрĕ,—
Аса килђĕ кил...

Çӳл тӳпери сар хĕвел
Пăхрĕ йăл-л кулса;
Кӳрентернĕ сивĕ хĕл
Иртрĕ тĕп пулса.

Çурхи ир илемлĕ,
Çанталăк уйар.
Ђас сана хисеплĕ
Тыр-пуллă уйах.

Шурăм-пуç çуталĕ,
Кулĕ йанкăс ир.
Каллех ыталĕ ак
Сана тăван хир.

Каллех ак выљанĕ
Аллунти çурла,—
Ват аңђу куљђанмĕ
Ес çукшăн уйра.

„Пайанхи хавасшăн
Йурлаха пĕрре“,
Тейĕн ес йăвашшăн
Çумри сар хĕре.

Йурласа еп пырăп
Санпа йунашар,
Ывăнмасăр вырăп
Сарă ыраша.

Ун ђухне ыталăн
Есĕ сар хĕре,
Манăн тунсăх халăм
Сивĕ уй-хирех...

Çавăнпа вăшлатрĕ
Çурхи ăшă çил.
Пуçăма хускатрĕ,—
Аса килђĕ кил...

◆◆

## ÇĔНĔ УЛАХРА.

Алла тытрăм палалайккă
Кĕвĕ калама...
Тусăм, тытăнха, тавайккă,
Йурă йурлама.

Пирĕн йурăпа кисрентĕр
Хĕрлĕ çĕн улах,
Ташă-вăйă хисеплентĕр
Умăрти çулах.

Хусах ташă сиктĕр, ђуптăр
Пирĕн кĕвĕпе;
Сарă хĕрĕ алă çуптăр
Ташă çемĕпе.

Хавас сасӑ йанах кайӗ,
Вӗҫӗ инҫенех...
Кивӗ пурнӑҫ пуҫне тайӗ
Пирӗн тӗнђенех.

Ҫамрӑк сасӑн хисеп пулӗ
Ҫӗнӗ улахра;
Ђӗрӗ вӑйӑн тути кулӗ
Хамӑр сӑмахра.

Ҫамрӑк ӗмӗр шӗл кӑварӗ
Сӳнмӗ пайанах:
Комсомол ӑна шӑварӗ
Ђӗртӗ самайах.

Пирӗн пурнӑҫ ҫеҫкеленнӗ
Ҫӗнӗ хӑватпа.
Манӑн хуйхӑм та тӗпленђӗ
Ирӗк сӑвӑпа.

Палалайккӑ, шӑрантар ес,
Йав халђ ҫӗн йурра!
Манӑн тусӑм—комсомолӗс
Мантӑр хӗн-хура.

Алла тытрӑм палалайккӑ
Кӗвӗ калама;
Ђӑваш хӗрӗ те „аппайккӑ"
Илтмӗ малалла.

1927 ҫ.

## АТӐЛ.

Пӗлӗте сухалаť
Сар хӗвелӗ,
Çурхи кун илемпе
Мухтанаť.
Атӑл шыв хумханса
Йухнӑ мелӗн
Çамрӑк ђунӑм пайан выљанаť.

Йӑлӑмран ӑшӑ çил вӗрсе килђӗ
Атӑл питӗнђен лӑпкаса.
Йулашки çутӑ пӑр
Хумпа вилђӗ
Хӗллехи куçӳлне йухтарса.

Хумханаť çурхи Атӑл илемлӗн,
Ун çине хаљ пӑхаť Шупашкар.
Илемпе унӑнпе еп пикентӗм,
Çавӑнпа ман ђӗре
Йӑваш мар.

Атӑл!
Санӑн пӗвӳ пит те ђаплӑ,
Çамрӑка ес йаран шухӑша.
Хулисем хушӑран
Сан асаплӑ,
Вилӗмпе туллашаç тӑтӑшах.

Сан çире кимӗсем
Йӗр йӗрлеççӗ
Лӑпкӑ хум йуррисен кӗввипе.

Хушăран пулăсем тĕр тĕрлеççĕ
Аслă, çутă шывăн хĕррипе.

Ытампа прахутсем ыталаççĕ,
Ах, йепле савăнатçке ђĕре!
Атăл, Атăл!
Мана ес калађђĕ,
Ђăвашсен тĕп хули миçере?

Еп пĕлетĕп:
Аваллăх вăл ватă,
Ун йурри—ĕмĕртен ĕмĕрех...
Ман çапах пайанхи
Вăй хăватăм
Çĕкленет нимĕнрен вирлĕрех!

Пурпĕрех ĕçпе мул ес паратăн,
Емĕртен хурлăхри халăха.
Ху ђапна авалах хăваратăн,
Хăваратăн ĕмĕр паллăха...

Сахал мар сан умна пуç тайаççĕ,
Сахал мар сан ђапу—кунпа çул;
Пĕр шыв мар санпа ал тытайаççĕ,
Шутласа пăхсассăн—
Темĕн ђул!

Епĕ хам
Сан пекех пулаймарăм,
Çыр хĕрне килсе тăтăм йури.
Ђĕрери кĕвĕпе вунă йарăм
Йĕркелерĕм хаваслăх йурри!

* * *

Сар хӗвелӗ – капăр, ылттăн урапа,
Çивӗтне турарӗ кӗмӗл турапа.

Тураса йакалҫӗ... Унăн çуттинҫе
Хавасланҫӗ пулӗ аслă çут тӗнҫе.

Теветленҫӗ йурă йешӗл улăхра,
Шăрçаланҫӗ сывлăм симӗс курăкра.

Ирхи сывлăм курӗк—мамăклă тӳшек,
Тӳпери хӗвелӗ—сиккелен путек.

Капăрланха, улăх! Кӗр ес ăвăçа.
Хапăлланҫҫӗ, терӗм, çамрăк сăвăçа!

Ах, апла пулмарӗ... ирӗклӗ тумлам
Ăнланма пӗлмерӗ манăн кăмăла.

Пурпӗрех телейлӗ тивӗçлӗ ăру...
Улăхра çӳретҫӗ пӗҫӗкçӗ пăру.

Амăшӗ ун ватă, ватă та мăкла,
Хаҫхи пурнăç уншăн пулҫӗ тамăкла.

Çулсерен вăл хӗсӗр. Вăкăр та тына
Кăçалҫҫен кӗменҫҫӗ пушă картана.

Пулаймарӗ уншăн йурăллă тивлет,
Шăлӗсем ун ӳкрӗç пуш кӗлте çисех.

Ырханах мăнтарăн... шăмăллă вӗҫе...
Наҫара пăхмарӗç—килҫӗç йевӗҫе.

Виçсе пăхрӗç урлă савнă тусăма,
Хуçине каларӗç татăклă сăмах:

— Усси çук, вăртахлăм, ватă хĕрĕнтен, —
[Йевĕҫсем ун пулнă Атăл хĕрĕнҫен...]

— Усси çук вĕт?
— Çук çав...
— Мĕншĕнха усран?
Пусса çи те, урăх илĕн Нурăсран!

Хĕрхенме пĕлмерĕç мĕскĕн ĕнене,
Пăталарĕ шухăш ватă ҫĕрене.

Ҫĕре йунĕ йухрĕ нӳрĕклĕ çĕре,
Кăлклатан ҫĕрийĕ сӳнҫĕ ĕмĕре...

Килĕштерҫĕ улăх унăн шухăшне,
Ах, çапах та шеллĕ мĕскĕн пăрушне!

◆◆

## ЙĔТĔН.

Кăвак та симĕс çивĕтиллĕ йĕтĕн,
Тинĕс пек тикĕс хумхан та ес çитĕн!

Хĕвелĕ сан çийĕн харсăрăн ташлатăр,
Сар кайăк ҫĕрийĕ сана аҫашлатăр.

Пурçăн та пӳллĕ кӳрнекĕмçĕм йĕтĕн,
Вăхăт ак пулĕ—кĕре те ес çитĕн.

Кӳренĕ те кӳтĕ кĕслеçĕ—сар кайăк;
Санăн çеçкӳ те кĕтмесĕр сархайĕ...

Пике пек сар хĕрĕ пикенĕ, пуçтарĕ,
Йарăмлĕ те пĕрĕ пĕвене путарĕ.

Сивӗ ҫил хайаран йурлӗ тӳпере,
Ҫапах та ес канан лапка пӗвере.

Ӗмӗрӳ сан иртӗ... Ан хуйхар ытла,
Ҫак йанкас ҫут ир, те тен кӗрӗн тылла.

Вӗрене кисипӗ ташлӗ сан ҫире,
Хӗрхенме пӗлеймӗ йешӗл тумтире.

Йерҫӳллӗ аннеҫӗм, вут хутна ђухне,
Тураса йакатӗ пайарка ҫӳҫне.

Йамакамҫам арлӗ сана кашни ир,
Шура йӗтӗн варӗ пулӗ катан-пир.

Аппана ҫӗлетӗп—катан-пир кӗпе
Умне те, вӗҫне те пурҫан тӗрӗпе.

Хаваслахла каҫан тахнап сана;
Йуратна йыснаҫам ђӗнӗ ханана.

Кӳрнекӗмҫӗм йӗтӗн, халӗ ҫеҫкере,
Ђасах ес пулан хакла ӗҫкӗре.

Ҫаванпа саватап йешӗл йӗтӗнме:
Васкаха, васка, теп, васка ҫитӗнме!

◆◆

## ЂАВАШ КӖВВИ.

Ђаваш кӗвви ҫӗрхӗрӗх сумла,
Йуррийӗ ун—йанравла сас.
Савни пайан вӗр-ҫӗнӗ тумла,
Ђӗрийӗ ун йурра хавас.

Аӡаш кĕсле тăсаť ҫĕн йурă,
Сассийĕ ун салхуллă мар.
Савни ӡĕри текех хĕнхурăн
Парни пулма хыт ӡуллă мар.

Кĕсле ҫемми—тивлетлĕ ҫемĕ
Илем сапаť тӳлек ире...
Савни, итле: йуратнă ҫемĕн
Инкек витеймĕ тек пире!

Текех сана куҫҫӳл тĕп тумĕ,
Ҫилли ун ҫитмĕ кайаллах.
Пайан уйав—хĕрарăм кунĕ
Сана хӳтлет кĕрен йалав.

Тĕп пултăр тек асап харамĕ,
Ӡĕрӳ ан пултăр ҫирĕкрен.
Ав, пăх: унта кун-ҫул урамĕ,
Кĕвви йухаť ун ирĕкре.

Васкар, савним! Васкар хавассăн,
Ҫитер ӡасрах вăл урама!
Куҫҫул тăкса ан ларха ассăн—
Текех вĕт ес те ӡура мар.

Киӡем хаӆ ӡас вăранĕ ťавшăн,
Выӆӆанĕ пĕр йупах ӡĕре;
Ес ху та вăл ҫитес мухтавшăн
Йалан пулăн вунҫиӡӡĕре.

◆◆◆◆

# ТУПМАЛЛИ.

Стр.

Умсăмах . . . . . . . . . . 2

**УЙĂП МИШШИ**

Проппеллёр . . . . . . . . . . 3
Çуллахи каникулта . . . . . . . . . . 5
Атăл ларићђен . . . . . . . . . . 7
Утă çинђе . . . . . . . . . . 8
Вырмара . . . . . . . . . . 10
Кунсем пайан—хут, кĕнеке . . . . . . . . . . 12
Ҳир кĕвви . . . . . . . . . . 13
Ĕçре . . . . . . . . . . 16

**ЙАНКАС**

Çыру колхоса . . . . . . . . . . 21
Çурхи кунра . . . . . . . . . . 24
Улăх йурри . . . . . . . . . . 27
Çĕртмере . . . . . . . . . . 32
Улах хĕрĕ . . . . . . . . . . 33
Аппа йурри . . . . . . . . . . 35
Ахаљши хаљ . . . . . . . . . . 38
Çулпуçне . . . . . . . . . . 40

**ТУКТАШ**

Ҳурçă тĕнђе . . . . . . . . . . 41
Ĕç уйавĕ . . . . . . . . . . 44
Отпуснĕке . . . . . . . . . . 45
Çурхи шухăшсем . . . . . . . . . . 47
Çĕнĕ улахра . . . . . . . . . . 48
Атăл . . . . . . . . . . 50
Сар хĕвелĕ . . . . . . . . . . 52
Йĕтĕн . . . . . . . . . . 53
Ђăваш кĕвви . . . . . . . . . . 54

# ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔН

## МАКАÇĔНĔСЕНЂЕ

### ÇАК САВĂ КĔНЕКИСЕМ ПУР:

| | | |
|---|---|---|
| 1. **Елкер**—Самана . . . . . . . . . . | 40 | пус |
| 2. **Вaçанкка**—Хастарлăх . . . . . . . | 35 | „ |
| 3. **Полорусовă**—Шелепи сăввисем, т. I, | 65 | „ |
| 4. **Çавăнпах** „ „ „ II, | 40 | „ |
| 5. **Çеçпĕл Мишши**—Сăвăсем . . . . . | 20 | „ |
| 6. **Хусанкай**—Уйартсан . . . . . . . . | 35 | „ |
| 7. **Уйăп М., Йанкас, Тукташ**—Сăвăсем | 45 | „ |
| 8. **Шулуççынни**—Çурхи кĕвĕсем . . . . | | „ |
| 9. **Рсай**—Çамрăк вăхăт . . . . . . . . | 16 | „ |
| 10. **Алэнтвй**—Пирĕн сăвă . . . . . . . | 25 | „ |
| 11. Октăпĕр хисепне—Сăвăсем . . . . | 35 | „ |
| 12. Тутарсен хаЂхи литтераттурĕнЂен | | „ |
| 13. Литтераттурă крамăтти никĕсĕсем (йалкорсемпе вĕренекенсене) . . | 75 | „ |

КĔНЕКИСЕНЕ ЂĂВАШ КĔНЕКИ УЙРĂМĔН МАКАÇĔНĔСЕНЂЕ тата ПУШТĂ КАНТУРĔ ÇУМĔНЂИ КИОСКĂСЕНЂЕ ИЛМЕ ПУЛАТ.

*Чебоксары, Красная площадь, ЧУВАШГИЗ.*

Хакĕ 45 пус Цена 45 коп.

УЙĂП М., ЯНГАС, ТУКТАШ — Сборник стихов

Чувашское Государственное Издательство
Чебоксары, Красная площадь